# В. Путин: “Белгород облаçĕпе Чăваш Ен наци проекчĕсене пурнăçа кĕртес енĕпе – лидерсем”

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Чăваш Республикинче управленин çĕнĕ меслечĕсемпе усă курса медицина пулăшăвĕн пахалăхне, унпа çынсем усă курассине лайăхлатнă. Тухăçлă технологисене тата çĕнĕ оборудование ĕçе кĕртсе, медперсонал ăсталăхне ÿстерсе ача амăшĕсем, тин çеç çуралнă ачасем вилессине икĕ хут чакарма пултарнă. Ялсенчи шкулсен ĕçне тĕплĕ шухăшласа йĕркеленĕ май вĕсем вĕрентÿ шайĕпе те, пурлăх никĕсĕ тĕлĕшпе те хула шкулĕсенчен кая мар. Унта хăюллăнах вĕрентÿ центрĕсем йĕркелеççĕ, тĕпрен илсен, çакă тÿрре кăларать. Ĕнер вăтам шкулсен вĕрентекенĕсем – Чăваш Енри ĕçтешсемпе çеç мар, ытти регионпа та эпĕ он-лайн йĕркипе калаçрăм – каланă пек: ашшĕ-амăшĕ, паллах, хăйсен ачисене çав вĕрентÿ центрĕсене ярасшăн. Кун пирки эпир нумай калаçнă, эпĕ кашни ялти шкулсене пĕтерме юрамасть текенсен шухăшне пĕлетĕп. Çавнашкал логика та пур, анчах ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисене халех лайăх пĕлÿ паракан вĕрентÿ центрĕсене ярасшăн. Унта вĕренсен ачасем çĕршыври чи лайăх вĕренÿ заведенийĕсене вĕренме кĕме пултараççĕ. Чăваш Енре çĕршыври йĕркеллĕ ВУЗсене вĕренме кĕрекен ял ачисен шучĕ вуннă мар, çĕр хут ÿснĕ! Ăнланатăр-и! Çакă – патшалăхăн пĕрлехи экзаменне аслă шкула кĕмеллипе пĕрлештернин, çав вĕрентÿ центрĕсем пуррин кăтартăвĕ. Палăртам: вĕрентĕвĕн наци системисен тупăшăвĕ анлă конкуренцин тĕп элеменчĕ пулса тăчĕ. Хăвăрт улшăнакан тĕнче ыйтнине кам хăвăртрах хăнăхать – çавă паян малта пулать. Паянхи тĕнчере технологисем вĕçĕмсĕр çĕнелеççĕ, инновацисене хăвăрт алла илеççĕ, ĕç ресурсĕсен анлă рынокĕсем йĕркеленеççĕ. Пурнăçра пĕрре илнĕ пĕлÿ текех профессири ăнăçу никĕсĕ пулаймасть ĕнтĕ. Малти плана çынсен питĕ пысăк информаци анлăшĕнче тĕллеве курма пĕлес, хăйсем тĕллĕн йышăнусем тăвас тата вĕсене ăнăçлă пурнăçлас пултарулăхĕ тухать.

**Раççей Президенчĕ Пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсем тата демографи политики енĕпе ĕçлекен канаш ларăвĕнче каланинчен (Белгород, 2007, авăн, 13).**

Конференци

# Пĕрлехи ĕçĕн пĕлтерĕшĕ пысăк

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Делегатсем “Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин Чăваш Енри регион уйрăмĕн Патшалăх Думин пиллĕкмĕш суйлавне ирттерессин тĕллевĕсене пăхса тухрĕç. Партин суйлав умĕнхи программине ырларĕç. Раççей халăхĕ истори шăпине палăртма, наци, кашни гражданинăн интересĕсене тĕпе хурса наци пуянлăхĕпе усă курма ирĕк пуррине тата çĕршыв аталанăвĕн стратегине суверенлă демократи принципĕсене тĕпе хурса пурнăçланине шута илсе хатĕрленĕ программăна. Партин палăртнă тĕп тĕллевĕсенчен пĕри вăл – Раççейри мĕн пур предприятие пĕр тикĕс ĕçлеме, пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталантарма условисем туса парасси. Сăмахран, “Шухăшсен фабрики” тата “Тухăçлă ертсе пыни – кадр резервĕ” проектсем çĕнĕ технологисене аталантарассине тата кадрсене хатĕрлессине “симĕс çутă” парĕç. “Транспорт коридорĕ” проектпа килĕшÿллĕн федераци трассисене тума, çул-йĕр юсаса çĕнетме, чукун çул, сывлăш, шыв çулĕсене аталантарма е çĕршывăн пĕрлехи экономика пĕрлĕхне туса хума палăртнă. Агропромышленноç комплексне аталантарасси – “Пĕрлĕхлĕ Раççейшĕн” тĕп тĕллевсенчен пĕри. Пенсие тата ĕç укçине ÿстерсе, инфляци шайне чакарса Раççее чухăнлăхран туртса кăларма, çĕршывăн хăрушсăрлăхне çирĕплетме шантарать программа...

Çавăн пекех конференцире Пĕтĕм Раççейри “Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин VIII съездне кайма делегатсем суйларĕç. Чăваш Енри регион уйрăмĕнчен съезда Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ М. Михайловский, Шупашкар хула администраци пуçлăхĕ Н. Емельянов, “Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕ” АУО генеральнăй директорĕ В. Свешников тата Елчĕк район администрацийĕн ĕç управленийĕн пуçлăхĕ Е. Михайлова хутшăнĕç. Уставпа килĕшÿллĕн Чăваш Республикин Президенчĕ, Пĕтĕм Раççейри “Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин Аслă канашĕн членĕ Н. Федоров тата Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин çĕршывсен хушшинчи ĕççсен комитечĕн председателĕ, “Пĕрлĕхлĕ Раççей” политика партийĕн генеральнăй Канашĕн президиумĕн секретарĕн çумĕ К. Косачев яланхи делегатсем шутланнă май, вĕсем те съезд ĕçне хутшăнĕç. Вăл Мускавра юпа уйăхĕн 1-2-мĕшĕсенче иртет. Унта РФ Патшалăх Думин депутачĕсен кандидачĕсен федераци тата регион списокĕсене çирĕплетĕç.

**В. ДАНИЛОВА.**

“Ылтăн туй” çитнĕ май

# Эсир пирĕншĕн ыра тĕслĕх

1957 çулхи май уйăхĕ. Чечеке ларнă çут çанталăк хĕвел ăшшипе киленет. Таврара кайăк сасси янраса тăрать.

...Паян хĕрсен ушкăнĕ иртенпех колхоз садĕнче йăрансем хатĕрлет. Тепĕр чух хĕрсем кулни Çавал шывĕ тăрăх таçта çитиех янраса каять, вара каччăсен чĕрисем кăлт! туса илеççĕ (вĕсем каç пуласса, хĕрсемпе тĕл пуласса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ).

Кăнтăрла çитсен бригадир хĕрсем патне кĕрнеклĕ каччăна ертсе пычĕ те: “Паллашăр: агроном-практикант! Астăвăр, хĕрсем, кун пек каччăна алран ан вĕçертĕр!” – терĕ.

Вăрăм тачка çивĕтлĕ, йăлтăр çĕмĕрт куçлă Рая çавăнтах: “Ай-уй, ку каччăн килĕнче 2-3 ача чупать пуль!” – тесе хушса хучĕ. Хĕрсем ахăлтатса кулса ячĕç.

Кăвак куçлă каччă, хĕрелсе кайрĕ пулин те, хуравне çийĕнчех пачĕ: “Эсĕ мана качча пыма килĕшсен, 3 ачаран кая мар çуратăпăр!” Халĕ ĕнтĕ хĕрĕн пичĕ пиçнĕ çырла пек хĕрелсе кайрĕ. “Асту, Рая, сан çине куç



хыврĕ ку каччă!” – терĕç ăна тантăш хĕрĕсем, айккинчен кăлт! тĕксе.

...Чăн та, ку каччăпа хĕрĕн шăписем пĕр тĕвве çыхăнаççĕ. Çав çулах агроном-практикант çак хĕре Канаш тăрăхĕнчен Муркаш районĕнчи Сосновка ялне илсе килет, мăшăрăм тесе чĕнме пуçлать.

…Çапла тĕвĕленет çак ялти Платоновсен çемйи. Георгий Платоновичпа Раиса Федоровнан пурнăç кустăрми çулсем шутласа чупма пуçлать. Георгий Платонович хăйĕн шăпине шкул ĕçĕпе çыхăнтарать, Сосновка шкулĕн директорĕ пулса 22 çул хушши вăй хурать, сахал мар ачана тĕрĕс çул çине тăма пулăшать, халăх хушшинче хисеплĕ ята тивĕçет.

Раиса Федоровна вара Ильич ячĕпе хисепленекен колхозра нумай çул хушши кладовщик пулса ĕçлет, хăйĕн тирпейлĕхĕпе, кăмăлĕпе, ĕçе тĕплĕн туса пынипе палăрса тăрать.

Çак çемьере, чăнах та, 3 ача çуралса ÿсет. Çулĕсем çитсен виççĕшĕ те аслă пĕлÿ илеççĕ. Аслă ывăлĕ Олег, инженера вĕренсе тухнăскер, Ульяновск хулинче пурăнать. Игорьпе Светлана Муркаш районĕнчех учительсем пулса ĕçлеççĕ.

Паянхи куна Георгий Платоновичпа Раиса Федоровнан мăнукĕсем те çитĕннĕ ĕнтĕ. Вĕсенчен пĕри аслă пĕлÿ паракан вĕренÿ заведенийĕнчен вĕренсе тухма ĕлкĕрнĕ, тăваттăшĕ çавăн пек заведенисенче ăс-тăнĕсене туптаççĕ, кĕçĕн мăнукĕ шкул çулĕнчен тухайман-ха.

Сентябрь уйăхĕнче Платоновсен çемйинче уяв – ылтăн туй. Георгий Платоновичпа Раиса Федоровна пĕрлешни 50 çул çитрĕ.

Çак паллă кунпа чысласа эпир, вĕсен ачисемпе мăнукĕсем, вĕсем умĕнче çĕре çити пуç таятпăр; юратнă атте-аннене, асатте-асаннене, кукаçпа кукамая тăнăç пурнăç, çирĕп сывлăх, телейпе савăнăç сунатпăр. Эсир пирĕншĕн ĕмĕрех тĕслĕх пулнине ĕнентеретпĕр, малашне те сирĕн хĕвел пек ăшă кăмăлусемпе савăнса пурăнасса шанатпăр!

**Кĕçĕн хĕрĕ СВЕТЛАНА.**

**Сăн ÿкерчĕкре: вĕсем алла-аллăн тытăнса утма пуçланăранпа 50 çул çитрĕ.**

Шалти ĕçсен пайĕнче

# Преступленисен хисепĕ чакрĕ

**Сакăр уйăх ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе тĕплĕнрех паллаштарма районти шалти ĕçсен пайĕн штаб ертÿçинчен, милици майорĕнчен В.Г. ЯКОВЛЕВРАН ыйтрăмăр.**

– Сакăр уйăх хушшинче районта 371 преступлени тупса палăртрăмăр. Çакă иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 19,2 процент пĕчĕкрех. Вăл шутра пысăк мар йывăрăшлисем 160, вăтам йывăрăшлисем 145 преступлени.

Хамăр ĕçре профилактика ĕçĕ çине пысăк тимлĕх уйăратпăр, вĕсем витĕмлĕ пулччăр тесе тăрăшатпăр. Çавна май хăш-пĕр кăтартăва чакарма пултартăмăр. Уйрăмах йывăр преступленисене 25 процент, çаратассине 23,8 процент, çын сывлăхне хавшатас тесе тунă преступленисене 40 процент, хĕнессине 31,1 процент чакарма пултартăмăр. Çав хушăрах обществăлла вырăнсенче тунă преступленисем 33,3 процент чухлĕ ÿсрĕç.

Уйрăмах йывăр преступленисене уçасси 100 процентпа, йывăр преступленисене уçасси 81,3 процентпа, вăтам йывăрăшлисене уçасси 53,7 процентпа танлашрĕ. Çак кăтартусем иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен пĕрер пусăм хăпарчĕç.

Оперативлă шырав ушкăнĕ “Шырав” йĕркене пăснă 23 факт тупса палăртнă тата 23 преступление уçма пултарнă. Маларах тунă 39 преступление уçăмлатнă.

Преступленисене пĕтĕмĕшле уçасси 72,4 процентпа танлашрĕ. Çакă республикăри кăтартуран 14,1 процент чухлĕ лайăхрах. Иртнĕ çулхи çак тапхăрта уçнă преступленисен йышĕ вара 332-рен 284-на çити чакрĕ.

Следовательсен аллинче 232 уголовнăй ĕç пулнă. Пĕтĕмпе 103 ĕçе вĕçленĕ, 2-шне чарса лартма тивнĕ. Пĕр уголовнăй ĕçе прокурор çумĕ хушма тĕпчев ĕçне ирттерме каялла тавăрса панă. Следовательсен аллинче тĕпчев ĕçĕсене ирттермелли 60 уголовнăй ĕç шутланать. Саккуна пăсса арестленисем, тытса чарнисем пулман. Дознавательсен аллинче 144 уголовнăй ĕç пулнă. Айăплав пĕтĕмлетĕвĕпе прокуратурăна 78 ĕç ăсатнă. Суда янă ĕçсенчен тÿрре кăларакан приговор пулман.

Сакăр уйăх хушшинче ниçта та ĕçлеменнисем 180 (208), ушкăнпа 62(23), ÿсĕрле 46(79), малтан та преступлени тунисем 81 (55) преступлени тунă.

Криминаллă милици уйрăмĕ тунă преступленисене уçасси çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çулталăкăн 8 уйăхĕ хушшинче криминаллă милици çыннăн пурнăçне, сывлăхне, прависене сыхлас тĕлĕшпе тĕрлĕ комплекслă мероприятисем туса ирттерет. Çапах та çак енĕпе 145(88) преступлени тунă. Криминаллă милици енĕпе тунă преступленисене 81 процент ÿçнă. Çак уйрăм хăйĕн вăйне преступленисене уçасси, шута илменнисене тупса палăртасси, саккуна пăсса наркотиксемпе, хĕç-пăшалпа суту-илÿ тăвакансене тытса чарасси, шырав тата тĕпчев органĕсенчен тарса çÿрекенсене тытасси, çавăн пекех хыпарсăр çухалнă çынсене тупасси çине ытларах тимлĕх уйăрать. Июль уйăхĕнче саккуна пăсса хĕç-пăшалпа суту-илÿ тунă 5 преступление, çавăн пекех наркотиксемпе усă курнă 2 преступление тупса палăртнă.

Сывлăха сыхлас, вĕрентÿ, АПК, çурт-йĕр тăвас наци проекчĕсем тĕлĕшпе федераллă бюджетран уйăрнă укçа-тенкĕне вырăнлă усă курнине те тĕрĕслесех тăнă.

Районти шалти ĕçсен пайĕнче учетра 384(346) çын тăрать. Вĕсенчен вăхăтсăр условно майпа ирĕке кăларнисем 50(39). Алкоголизм, наркомани чирĕсемпе чирлесе сывлăха сыхлас учрежденисенче учетра тăракансем йĕркене пăснă 43(37) тĕслĕх тупса палăртнă. Çемьере харкашу кăларакансем 68(59)-ăн пулчĕç.

Саккуна пăсса эрех сутакан паянхи кунăн çивĕч ыйтăвĕ пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе эпир прокуратура ĕçченĕсемпе рейдсем ирттеретпĕр. Уйрăмах çул çитмен çамрăксем çине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Пĕтĕмпе вара 380 тĕрĕслев ирттернĕ. Рейд вăхăтĕнче 3,5 литр этил спирчĕ, спирт шĕвекĕ 13,4 литр, сăмакун 16,5 литр туртса илнĕ. Çавăн пекех сутуçăсене аларан тытас тĕлĕшпе шĕвексене ятарласа туяннă. Çапла вара 42 çынна ку ĕçпе услам тунăшăн тытнă, административлă майпа явап тыттарнă.

Çул çитмен çамрăксем преступлени тăвассине, çавăн пекех вĕсене усал ĕçе явăçтарассине чарас тĕлĕшпе чылай ĕç тума тăрăшатпăр. Сакăр уйăх хушшинче çул çитмен çамрăксем тунă 42(13) преступлени регистрациленĕ. Пĕтĕмпе вара учетра 53 çамрăк тăрать.

Ăнăççăр çемье шутĕнче 8 çемье шутланать. Ашшĕ-амăш прависенчен хăтарас тĕлĕшпе 6 материал пухса хатĕрленĕ.

Вĕрентÿ заведенийĕсенче 74 хутчен калаçу ирттернĕ. Çул çитмен çамрăксем тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм тăрăшнипе 14 преступление уçса палăртнă. 67 ăнăççăр çамрăка шалти ĕçсен пайне чĕнсе килме тивнĕ.


Объявление

**Сообщение конкурсного управляющего СХПК «Нива»**

о проведении повторных открытых торгов в форме аукциона ООО «Альянс» , г.Чебоксары /организатор торгов/ проводит третьи открытые торги в форме аукциона на повышение по продаже имущества СХПК “ Нива ” / Чув.Р., Моргаушский р-н,с.Большое Карачкино, ИНН2112000482/.

Дата третьих торгов 19 .10.07г. в 10ч.00мин. Ознакомление с условиями аукциона, порядком оформления участия, характеристиками объектов, приём заявок до 17.10.07г.17ч.00мин., заключение договора о задатке, аукцион проводится по адресу : г,Чебоксары,Ишлейское ш.,д.8,тел.8-927-845-87-92,69-43-07.

Имущество для третьих торгов разбивается на 16 лотов.Задаток-10%.Шаг аукциона-1%.

**Лот №1: Комплекс МТФ д. Ойкасы, в т.ч.:** Начальная цена-**559 620 руб.**

коровник нижний, 1978; коровник верхний ,1987; свеклохранилище,1989;

верхний, 1987; свеклохранилище,1989; телятник 1988; мельница МТФ,1976;

сенажная траншея ,1983; водобашни 1976 /2шт./; автовесы 10 т. 1989; ёмкости.

**Лот №2: Комплекс МТП с. Б.Карачкино, в т.ч.:** Начальная цена - **451 800 руб.**

реммастерская старая, 1960; гараж для гусеничных тракторов,1992;

гараж для гусеничных тракторов1992; реммастерская новая, 1971;гараж на 60 а/м. *1990;*

склад запчастей 1990; кран-балки 1т и 3 т/5шт./; молот кузнечный МВ-41127,1985г.;

пресс гидравл.ОКС,1970;станок верт.-сверл.1977;станок токарно-винторезный 1М61,1978 .

**Лот №3: Комбайн кормоуборочный самоходный Е-281**,1990 Начальная цена - **125 190 руб.**

**Лот №4: Автовесы передвижн. 10 т. РП-15Ш 13**, 1989 Начальная цена - **5 000 руб.**

**Лот №5: Картофелехранилище** д. Турикасы,1980. Начальная цена - **58 860 руб.**

**Лот №6: Картофелехранилище** д. Мижары, 1984. Начальная цена - **69 570 руб.**

**Лот №7: Овощехранилище** с. Большое Карачкино, 1991. Начальная цена- **112 000 руб.**

**Лот №8: Зерносклад деревянный семенной** с.Б.Карачкино,1979. Начальная цена - **13 600 руб.**

**Лот №9: Зерносклад на 500 т.** с. Б. Карачкино Начальная цена - **49 230 руб.**

**Лот №10: Пилорама Р-63-4Б с сараем,** 1966. Начальная цена - **17 100 руб.**

**Лот №11: Административное здание**, 1979. Начальная цена - **128 700 руб.**

**Лот №12: Центральная столовая,** 1970. Начальная цена - **42 500 руб.**

**Лот №13: Пожарное депо,** 1970. Начальная цена - **90 990 руб.**

**Лот №14: Гараж-склад для запчастей б/у** Начальная цена - **29 430 руб.**

**Лот №15: Мельница** д. Мижары, 1978г. Начальная цена - **45 810 руб.**

**Лот №16: Силосная траншея,** 1982. Начальная цена - **4 000 руб.**

Для участия в торгах необходимо подать заявку, заключить договор о задатке, приложить документ, подтверждающий внесение задатка, опись приложенных документов. Дополнительно представляются копии: для физ. лица - паспорта представителя (покупателя), свидетельства о постановке на налоговый учет. , для предпринимателя – свидетельства о внесении записи в ЕГРИП, для юр. лиц:

- учредительных документов, свидетельства о гос. регистрации; документа, подтверждающего полномочия представителя претендента; иные документы, в случаях, предусмотренных законодательством, учредительными документами претендента. Задаток должен быть внесен на расчетный счет не позднее, чем за 2 дня до проведения торгов по следующим реквизитам: ООО «Альянс», ИНН 2127331649,КПП 213001001,Чувашское ОСБ№8613 г.Чебоксары,р/с 40702810075020170148, БИК 049706609, К/с 30101810300000000609.

Победителем торгов признается участник, предложивший наиболее высокую цену. Протокол об итогах аукциона подписывается в день его проведения. Покупатель обязан уплатить цену продажи не позднее ,чем через десять дней с даты подведения итогов третьих торгов.

В случае, если имущество СХПК «Нива» не будет продано 19.10.07г., то продажа осуществляется посредством публичного предложения лицам, предложившим в течение месяца со дня завершения третьего аукциона наибольшую цену. Кроме того, запчасти,эл. двигатели,эл. технические изделия,ремни,магнитные очистители воды, ёмкости 10 м3,25 м3,50м3, ККМ «Орион» 100К,здания на снос и др.реализуются по прямым договорам купли-продажи.